# ÇЕÇПĔЛ МИШШИ

## *(амăшĕ каласа панинчен)*

Укахви мăнаккан, Агафия Николаевнăн, пичĕ çинче те, çамки çинче те пĕркеленчĕксем нумай. Вĕсене пурнăç йĕрĕсем теес килет ман. Тăхăрвунă çултан иртнĕ çак чăваш хĕрарăмĕ хăй ĕмĕрĕнче мĕн кăна курман пулĕ! Вăл курнине, вăл тӳссе иртгернине çырма та, каласа пама та хал çитерес çук. Вăрçă хыççăн вăрçă... Выçлăх çулĕсем. Çемьери йывăр кунсем...

— Мишша хăйĕн «Чăваш арăмне» сăввине йăлтах ман пурнăçăм çинчен çырнăн туйăнать, — терĕ Агафия Николаевна, арчаран ывăлĕн «Çырнисен пуххине» кăларнă май.

*Хурт-кăпшанкă*
*та çу кунĕ*
*Савăнса вĕçетчĕ,*
*Çутçанталăкшăн, хĕвелшĕн*
*Вăл та хĕпĕртетчĕ.*

*Сан чĕрӳ анчах*
*хĕн витĕр*
*Савăнăç пĕлместчĕ,*
*Вучах умĕнче*
*вăраххăн*
*Ĕмĕрӳ иртетчĕ...*

Çак йĕркесене вуланă чух Агафия Николаевна куçĕнчен çутă тумламсем пăчăртанса тухрĕç. Эпĕ вулама чарăнтăм, кĕнекене сĕтел çине хутăм. Манăн та чун хурланчĕ.

Агафия Николаевна хăй ватлăхне пĕрре те палăртасшăн мар. Ывăнман-ха, тата çакна каласа парам тет. Чăнах та, кăвар чĕреллĕ поэтăмăрăн, Çеçпĕл Мишшин, ача чухнехи пурнăçĕ çинчен кам-ха ун пек тĕплĕн каласа пама пултарĕ!?

— Манăн хĕр чухнехи пурнăçăм çав тери йывăр пулчĕ, — терĕ Агафия Николаевна. — Пĕр çулхине пирĕн яла усал чир пырса кĕчĕ те хĕрĕх çын ытла пуçтарса тухса кайрĕ. Çак хаяр кунсенче ман анне те вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Эпĕ, тăхăр çулхи хĕрача, тăлăха юлтăм. Атте, аллă çула çитнĕскер, авланма шутларĕ. Çирĕм виçĕ çулхи Кулинене качча илчĕ. Киле амăçури кĕрсен, ман пурнăç йăлтах арканса кайрĕ. Кунĕ-кунĕпе выçă ларма тиветчĕ. Тăхăнма тум çукчĕ. Ку çеç-и? Амăçури анне мана пур майпа та хĕсме пуçларĕ. Атте те, ун элекне ĕненсе, килтен хăвалама тытăнчĕ.

Вунтăххăра çитсен, мана çураçрĕç, хамран ыйтмасăрах Касаккасси Мĕкĕтине качча пама килĕшрĕç. Хам ăна куçпа та курманччĕ. Мана çураçнине илтсен, Шуркассинчи Хĕветура аппа чупса пычĕ те:

— Укахвие çурма суккăр çынна качча паратăр эппин, — тесе вăрçа-вăрçа макăрчĕ. Юлашкинчен, Мĕкĕтесем патне кайса, амăçури парса янă парнесене каялла илсе таврăнчĕ.



Нумай та вăхăт иртмерĕ — Касаккассинченех Куçма хăтана пычĕ. Аттепе амăçури аннен тиркев çук: вĕсен мана кама та пулин качча памаллах.

— Каймастăп, — тетĕп эпĕ.

— Пĕрре çураçнă хĕрĕн каймаллах. Ватта юлăн тата, — ӳкĕтлет мана амăçури анне. Атте те ун йĕрĕпех пырать.

— Кăмăла килмен çынна тухиччен мăнастире каятăп, — тетĕп татах.

— Сана унта йывăр пулать, — тет атте.

Çапла вара хама килĕшмен çыннах качча тухмалла пулчĕ.

Эпĕ Куçма килĕнче çĕнĕ çын. Ăш вăркать, чун пĕрре те вырăнта мар.

— Куçма ашшĕ Хĕветĕр, аслашшĕ Исаак, унăн ашшĕ Михала, — тăванĕсемпе паллаштараççĕ мана. Пурăна киле Куçмана хăнăха пуçларăм. Çапах та унăн тӳнтерле енĕсене кăмăлламастăм: час çилленетчĕ Куçма, чĕрре кĕме пăхатчĕ.

...Кĕрхи каç. Сивĕ. Пăртак юр çуса иртрĕ. Куçма çăпата тăвать. Эпĕ кĕнчеле арлатăп. Çав хушăра Михала пырса кĕчĕ те:

— Куçма, вăрманта Петĕр вăкăрĕ вилнĕ. Ăна хайне, çĕрме пуяна, вилнĕ вăкăр тирĕ кирлех мар пулĕ. Иксĕмĕр кайса сӳсе килер, — терĕ.

Куçма килĕшрĕ. Ирхине Михалана кĕтрĕ-кĕтрĕ, леш темшĕн пымарĕ. Куçма вара пĕччене вилнĕ вăкăр тирне сӳсе килчĕ, тепĕр кунне тунти пасарне сутма кайрĕ. Ак тамаша: Куçма тухса кайсанах, пирĕн пата вăкăр хуçипе унăн тусĕсем персе те çитрĕç.

— Ав кам иккен Петĕр вăкăрне пусакан! Хăй ăçта? — кăшкăрашаççĕ куштансем. Урса кайнăскерсем çавăнтах тунти пасарне тухса вĕçтерчĕç. Унта Куçмана шыраса тупнă та тăнран кайиччен хĕнесе пĕтернĕ. Тепĕр кунне Петĕрсем пирĕн çурта хупăрласа илчĕç. Куçмана халăх хушшине илсе тухса хĕнесшĕн. Ниçта кайса кĕме çук. Куçма тухмасть, вĕлересрен хăрать. Шала та кĕртмест. Унччен те пулмарĕ — пакур тупса килчĕç, унпа Куçмана пӳртрен сĕтĕрсе кăларасшăн. Çук, Куçма парăнмасть, пакур аврине пуртăпа касса татрĕ. Хайхи çынсем:

— Айтăр, урапине, качакине сутар! — тесе кăшкăраççĕ. Пĕтĕм урам кĕрлесе тăрать. Чылай вăхăт иртрĕ, Куçма тухса тарасран тăвата çынран хурал тăратса хăварчĕç.

— Мана хураллама кирлĕ мар, — тет ман старик. — Эпĕ çын выльăхне пусман. Йăнăшăм та вилнĕ вăкăр тирне сӳсе килнинче çеç. Суд пур. Вăл мана, айăплă пулсан, хуптăр, айăпăм çук пулсан — каçартăр, — тет. Çак сăмахсене илтсен, хурала юлнă çынсем килĕсене саланчĕç.

Эпĕ ун чухне Мишшапа йывăр çынччĕ. Çав тери хăранипе сиксе чĕтретĕп. Чăнах та, тем вăхăтран суд пулчĕ, Куçма айăплă мар терĕç.

Кĕçех Куçмапа иксĕмĕр пĕр старикрен, хĕрĕх тенкĕ парса, хура пӳрт туянтăмăр, уйрăлса тухрăмăр.

Çав хура пӳртре эпĕ тĕлĕнмелле тĕлĕк куртăм: ман атте урамра, хапха умĕнче тăрать пек. Пăхатăп та — пӳрт çумĕнче çап-сутă пуртă вырта парать. Аври темшĕн çурăк вара. «Атте, пуртă тупрăм», — тетĕп. Атте мана пӳрнипе юнать: «Асту, кĕлете кĕртсе хур», — тет. Ирхине хам курнă тĕлĕке Куçмана каласа пама çеç пуçланăччĕ — ăш ыратса килчĕ. Çав вăхăтра пирĕн пата кӳршĕ çынни Мархва пырса кĕчĕ. Эп тертленме пуçланине курсан вăл: «Ачу çавраннă, паян çурататăн», — терĕ. Чăнах та, çав кунах ывăл ача туса патăм. Ăна ят хутăмăр. Мишша терĕмĕр.

Мишша патвар çитĕнсе пычĕ: тăхăр уйăхрах утма тытăнчĕ, çулталăк тултарсан калаçма вĕренчĕ.

Аса килнĕ чух çавна та каласа хăварам: пĕрре, çуркунне, пӳрт умĕнче сӳс тыллатăп. Мишша та мана пулăшма тухнă. Хăй калаçма тин вĕреннĕччĕ-ха. Тахăш самантра вăл пахча çумĕнчи вĕлтрен çине кĕрсе кайнă.

— А-ай, анне, хырăма пипи! — тесе йĕрет хăй.

Эпĕ чупса пытăм та ăна вĕлтрен хушшинчен йăтса кăлартăм.

Çакна та манман-ха. Пĕр çуллахи кун старикпе иксĕмĕр Шăхасан пасарне кайрăмăр, хамăрпа пĕрле Мишшана та илтĕмĕр. Пасарта çӳренĕ чухне, кĕтмен çĕртен, Мишшана çухатрăмăр.

Малти кĕтесре халăх кĕпĕрленсе тăрать. Унта пĕр чĕлĕхлĕ купăс сутаççĕ-мĕн. Ак тамаша, çынсем хушшинчен Мишша персе тухрĕ, аллинче — пĕчĕк купăс. Эпир сăнатпăр: Мишша пасар хушшипе купăс каласа пырать. Ашшĕ ун патне чупса çитрĕ те:

— Мĕн тăватăн, ачам? — тесе ыйтрĕ.

— Купăс калатăп, — тет Мишша.

— Купăсне ăçтан тупрăн?

— Ав çав лавккара сутаççĕ, — хуравлать Мишша. Куçма вара ачана çавăтрĕ те купăсшăн укçа кайса тӳлерĕ. Çапла Мишша пĕр чĕлĕхлĕ купăс туянчĕ...

Пĕррехинче хур чĕпписене çерем çине хăваласа кайрăм. Манпа пĕрле пилĕк çулхи Мишша та пычĕ. Хĕвел хĕртет. Шăрăх. Мишша питех те савăнăçлă: вырăнта тăма та пĕлмест, хурсем хушшине кĕре-кĕре тухать. Эпĕ, вăхăт ирттĕр тесе, юрă ĕнерсе ларатăп. Мишша ман пата пычĕ те кĕтмен çĕртен юрă пуçларĕ:

*Шыв хĕрринчи кăвакал, кăвакал,*
*Сана хуçа вунă пуса сутас тет,*
*Сăрнай илсе калас тет...*

Эпĕ ку юрра халиччен илтменччĕ. Тĕлĕнсе кайрăм. «Мишша, эсĕ çак юрра ăçтан вĕреннĕ?» — тесе ыйтатăп. Вăл вара çав юрра хăйсем шыва кĕме çӳренĕ чух юрлани çинчен каласа пачĕ.

Кăнтăрлапа хур чĕпписене киле хăваласа килтĕмĕр. Старик картишĕнче ĕçлет. Эпĕ вут чĕртрĕм, яшка пĕçерме хуран çакса ятăм. Мишша чӳречерен урамалла пăхса ларать. Унччен те пулмарĕ — сак çинчен анчĕ те:

— Атте, сана пĕр тутар: «Пухча, пулă илме тух», — тет. Эпĕ нимĕн те ăнланмастăп, мĕн вăл «пухча» тесе шухăшлатăп. Каярахпа çеç тавçăрса илтĕм: тутарĕ Пухча мар, Куçма тенĕ пулас, анчах та пĕчĕк Мишша Куçма теме пĕлеймен.

Çав çулах, пĕр кĕрхи кун, ир пуçласа каçчен пахчара хăмла татрăмăр. Пирĕнпе пĕрле Мишша та çине тăрса хăмла татать.

— Мишша, ĕçле-ĕçле ывăнтăн пулĕ, ларса кан, — тетĕп çакна шеллесе.

— Çук, канмастăп, часрах татса пĕтересчĕ, — тет Мишша. Эпир пĕчĕк ача çапла ăслă калаçнинчен пурте тĕлĕнтĕмĕр.

Куçма шăллĕн, Праккан, арăмĕ пĕр ача та çуратмарĕ. Çавăнпа Мишшана яланах хăйсем патне илсе каятчĕç. Ăна çав тери юрататчĕç. Хĕлле Пракка Мишшана çунашка илсе пачĕ.



Пĕрре Пракка арăмĕ пирĕн пата пычĕ те:

— Укахви инке, Мишша мана хамăр ача пекех туйăнать, ăна пире усрама памăн-ши? — терĕ. Эпĕ кăмăлсăрланнă пек пултăм.

— Хам чунăма сире усрама парăп-и вара, — тесе хутăм.

Мишша ашшĕ пĕр-икĕ çул шкула çӳренĕ. Вăл час-часах кĕнеке тытса ларатчĕ. Мишша та унран шкула кайиччченех вулама вĕренчĕ.

Кун хыççăн кун иртрĕ. Мишша шкула çӳреме тытăнчĕ.

— Анне, эпĕ шкулта лайăх вĕренекенсенчен пĕри, — тетчĕ вара хăй, чун-чĕререн савăнса. Кĕнеке вулама юрататчĕ, хăш-пĕр чухне мана та вуласа кăтартатчĕ. Пĕрре çапла те хăй çырса илнисене, те кĕнекере тухнă халăх юррисене нумай вуларĕ. Çав юрăсенчен хăшĕ-пĕри ĕмĕрлĕхех асăмра юлчĕç.

*Акăш вĕçсе пынă чух*
*Кам курать-ши урине?*
*Çич ют килне кайсассăн,*
*Кам курать-ши ыррине?*

*Икĕ витре шыв ăсрăм,*
*Пусма вĕçне лартаймарăм.*
*Ахах ятăм — путмарĕ,*
*Кĕскĕ ятăм — юхмарĕ.*

Мишша юрă юрлама юрататчĕ. Эпир унпа пĕрле мĕн чухлĕ юрламан-ши? Пĕррехинче Малтикасри Çемен хурăнташăм патне хăнана кайрăм. Мишша та пĕрле пычĕ. Пăртак ларкаласан, эпĕ юрă пуçларăм. Пăхатăп: Мишша та манпа шăрантара парать:

*Уя тухсан мĕн лайăх? —*
*Ака-суха сасси лайăх.*
*Яла кĕрсен мĕн лайăх? —*
*Автан сасси — çавă лайăх...*

Эпир юрланине хăнари çынсем кăмăлласа итлерĕç.

Мана, Шупуçĕнчен качча пынă çынна, çакă питех те тĕлĕнтерчĕ: Касаккассисем шывсăр пурăнаççĕ. Ялĕнче кӳлĕ те, пĕве те çук. Хĕрарăмсем кĕпе çума икĕ çухрăмри вăрмана каяççĕ. Пирĕн хыçран пĕр пĕчĕк çырма юхса иртетчĕ. Çавна пĕвелемелле мар-ши? Кӳршĕ çыннисемпе калаçса пăхрăм. Вĕсем те ман шухăша ырларĕç. Çуллахи пĕр хĕвеллĕ кун касри çынсене пĕве пĕвелеме чĕнсе тухрăм. Ватти-вĕтти, арçынĕ-хĕрарăмĕ пурте пĕве тума анчĕç. Пĕр çын сурать — типсе пырать, халăх сурать — кӳлĕ пулать тени тĕрĕсех çав. Лайăх пĕвех пĕвелесе хутăмăр. Шыв хĕрринче пурнăç вĕреме пуçларĕ. Мишша унта хамăр кас ачисемпе пĕрле Сарпуç çырминчен пулă тытса килсе ячĕ. Çул хыççăн çул иртрĕ. Пулă ĕрчесе кайрĕ. Çапла эпир шывлă та, пулăллă та пултăмăр.

Пĕр каçхине, мунча кĕрсе тухсан, пăхатăп та — килте Мишша ывăлăм çук. «Ял çумĕнчи çĕртме пуссине лаша çитерме кайрĕ вăл», — пĕлтерчĕ старик. Эпĕ хăраса ӳкрĕм.

— Мĕнле капла, мунча кĕрсе тухнă ачана выртмана ятăн пулать-ха? Шăнса пăсăлсан, мĕн курса тăрăпăр? — тетĕп. Куçма нимĕн те чĕнмест. Вăл хăй айăпне туйса илчĕ пулас.

Чăнах та, выртмаран Мишша хытă шăнса таврăнчĕ, часах аптраса ӳкрĕ. Ури шыççа кайрĕ, тупанĕ хытса ларчĕ. Ача уксахлама пуçларĕ. Ура ыратать тесе макăракан пулчĕ.

Пĕр вырăс хĕрарăмĕ ачана тăвар шывĕ çине лартма хушрĕ. Çапла туни пăртак пулăшрĕ пулас: пакăлчак тĕлĕнчи шыçă шăтрĕ. Пурпĕрех Мишшана килте тӳрлетеймерĕмĕр. Шăхасан больницине илсе кайрăмăр. Тухтăрсем ача урине татмалла пулать терĕç. Эпир килĕшмерĕмĕр. Икĕ эрне выртнă хыççăн Мишша, пăртак юсанса, киле таврăнчĕ. Хăй çаплах уксахласа утакан пулса юлчĕ.

Пĕррехинче, Мишша патне апат-çимĕç леçме кайсан, Шăхасан ачисем каçса кайса выляннине куртăм. Ман Мишша, ури ыратаканскер,

айккине пăрăнса тăнă та вĕсем вылянине хускалмасăр пăхать, пăхать... Мишша ачасемпе савăнма, выляма пултарайманшăн ман чун хурланчĕ. Çавăн чухне Мишшана çуратиччен курнă тĕлĕк аса килчĕ, эпĕ тупнă пуртă аври çурăк пулни çак инкеке кăтартнăн туйăнчĕ.

Аса килнĕ чухне çакна та каласа хăварам. Пĕр ирпеле Мишша чупса кĕчĕ те:

— Анне, хурсене Малтикас хĕрарăмĕ тытса кайрĕ. Тем тусан та памасть. Четвертак тесе çеç çаптарать, — терĕ пăшăрханса.

— Четвертак тени мĕне пĕлтерет? — ыйтатăп унран.

— 25 пус тени пулĕ вăл, — ăнлантарать мана Мишша.

Мишшапа иксĕмĕр Малтикаса кайрăмăр. Хурсене хăваласа кĕнĕ хĕрарăм килĕнче çукчĕ. Вара хамăрах хапхине уçрăмăр та хурсене кăларса килтĕмĕр.

Хурсем пире ырлăхне те, хурлăхне те нумай кăтартнă. Мишша хурсене питĕ юрататчĕ.

Мишша хыççăн эпĕ Курие, Петĕре, Кирлене, Иллене, Ульянана çуратрăм. Вĕсем пĕр-пĕринпе питĕ килĕштерсе пурăнатчĕç. Çавă хамăра та савăнтаратчĕ.

Анчах Кирле ăнсăртран ӳксе сывмарланса юлчĕ, ăна асат хуçрĕ. Паянхи пекех астăватăп: Кирле валли Мишша Шăхасантан пĕр татăк кулач илсе килчĕ. Кирле ниçта кайса кĕреймест, савăннă, пиччĕшне темиçе хут та пыра-пыра тав турĕ.

Кирле çав тери ăслăччĕ, чипер калаçатчĕ. Мишша ăна час-часах сăвăсем вуласа паратчĕ. Лешĕ каçса кайса итлетчĕ. Пĕррехинче пăхатăп та: Мишша Кирлене юрă вĕрентет. Нумай та вăхăт иртмерĕ — иккĕшĕ пĕрле «Коробейники» текен юрра шăрантарма пуçларĕç.

Пĕррехинче Мишша мана Шăхасана, хăй хваттерте пурăнакан Пухвир мучи патне, илсе кайрĕ. Кирлене те хăвармарăмăр, ăна та хамăрпа лартса кайрăмăр. Каçалапа Пухвир мучи Мишшаран сăвă каласа пама ыйтрĕ. Мишша çавăнтах хавасланса сăвă вулама пуçларĕ. Пурте тĕлĕнсе итлеççĕ. Черет Кирлене çитрĕ.

— Эсĕ мĕнле сăвă вулас тетĕн? — ыйтрĕç унран.

— Эпĕ юрлатăп, — терĕ те Кирле çавăнтах «Коробейники» юрлама тытăнчĕ. Пухвир мучи чăтса тăраймарĕ:

— Ну, Укахви, эсĕ пит аван ачасем ӳстеретĕн, — терĕ.

Тепрехинче пирĕн пата ачасен аслашшĕ Хĕветĕр пычĕ. «Асатте, лар, сан сăнна ӳкерем», — терĕ Мишша. Аслашшĕ килĕшрĕ. Пĕр-ик сехет те иртмерĕ пулĕ, Мишша хăй тунă ӳкерчĕке стена çумне тирпейлесе çакрĕ. Каснă-лартнă аслашшĕччĕ вара.

— Ку ача художник пулать. Ăна вĕренме ямалла, — тетчĕç хамăр пата пыракансем.

Мишша тĕрĕллĕ кĕпе питĕ тăхăнасшăнччĕ. «Тĕрĕллĕ кĕпе туса пар-ха, анне», — тетчĕ вăл час-часах. Тĕрлесе ларма вăхăт çук-çке манăн, — теттĕм эпĕ. — Кăмăлу пулсан — хăвна тĕрлеме вĕрентем, — терĕм тепрехинче. Мишша килĕшрĕ. Эпĕ тĕрленине тимлесе пăхса ларчĕ, часах ăнкарса илчĕ. Çапла хăй валли кĕпелĕх хăех тĕрлерĕ. Çимĕк вăййине вара Мишша тĕрĕллĕ кĕпепе тухрĕ.

Мишшана пилĕк çултах хамăрпа пĕрле тырă вырма илсе каяттăмăр. Вăта йăранти кĕске ыраша тăпăлтара-тăпăлтара вăл ман кĕлте çине хуратчĕ. Пĕррехинче çапла Мишша тĕм ăшне ларнă та кăт-кăтик, кăт-кăтик! тесе хăлаçланать. Эпир кулса пăхса тăратпăр.

— Мĕн тăватăн эс унта? — тетпĕр.

— Çăмарта тăватăп, — тет Мишша.

Çитĕнерех парсан, Мишшапа Кури, Петĕр — виççĕшĕ тырă вырма кайрĕç. Эпĕ ирхи апат пĕçерме юлтăм. Çанталăк сулхăнтарахчĕ. Мишшапа Кури ана çине çитсенех чĕркенсе выртнă-мĕн. Петĕре эп апат йăтса килессе сăнама тăратнă. Ана çине çитрĕм.

— Пăртак çеç выртасшăнччĕ. Сĕнк пулнă, шăнса хытса кайнă. Алăсем тытма та пĕлмеççĕ, — каласа парать Мишша. Хăйсем каçса кайса кулаççĕ. Апат çирĕмĕр те вырма пуçларăмăр. Тĕлĕнмелле: ачасем пĕринчен тепри лайăх ĕçлеççĕ.

— Çын пуласси ачаранах паллă тесе ахаль каламан çав, — тетчĕç çулпа иртсе çӳрекенсем.

Виçĕ ят тырра çапла ачасемпех вырса пĕтертĕм.

Мишша нихăçан та ĕççĕр çапкаланса çӳреместчĕ. Пушă вăхăт тупăнсанах, вăл хамăрпа юнашар пурăнакан Насаркка патне каçсаларатчĕ.

— Насаркка мучи юмах нумай пĕлет, калаçма питĕ ăста, — тетчĕ Мишша.

Насарккан Кĕçтенкки ятлă ачи пурччĕ, вăл Мишшана хăйпе пĕрле пулла, сертене илсе çӳретчĕ.

Мишша—çутçанталăка юратакан ачаччĕ. Çулсерен вăл урама йывăççем лартма тăрăшатчĕ. Анчах унăн ĕçĕ ялан пекех харама кайса пыратчĕ. Вăл лартнă йывăççене качакасем кăшласа пĕтеретчĕç.

— Анне, вăрмана кайса хурăн кăларса килемха. Хурăн урам илемне кӳрекен йывăç, — терĕ вăл мана пĕррехинче. Мишша çав кунах темиçе хурăн кăларса килчĕ. Иксĕмĕр пĕрер тĕпне хамăр пӳрт умне лартрăмăр. Вĕсене качакасенчен лайăх сыхларăмăр. Хурăнсем часах тымар ячĕç, çулçă кăларчĕç, сарăлса кайрĕç. Çав хурăнсем халĕ те хамăр пӳрт умне илем кӳрсе лараççĕ.

Васлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ.

*Сăнӳкерчĕксенче: Çеçпĕл Мишши амăшĕ Агафия Николаевна Уйăп Мишши сăвăçпа тата Чăваш халăх писателĕпе Илпек Микулайĕпе;*
*Çеçпĕл Мишши.*